# Финанс пайĕн историйĕнче – район аталанăвĕ

## Районти финанс служби йĕркеленнĕренпе – 85 çул

**Хальхи вăхăтра район администрацийĕн финанс пайĕнче питĕ туслă та пĕр-пĕринпе тачă çыхăнура ĕçлесе пыракан коллектив вăй хурать. 2006 çултанпа ăна Рената Иосифовна Ананьева ăнăçлă ертсе пырать. Коллективри кашни специалистах – пурĕ 14 ĕçчен – хăйсен профильне кура аслă пĕлÿ илнĕскерсем. Çамрăк коллектив ĕçе яланах тĕплĕ тума хăнăхнипе палăрса тăрать. Юлашки 10–15 çул хушшинче бюджета планласа ăна пурнăçлассинче кăна мар, ĕç мелĕсем те чылай улшăнчĕç. Финанс пайĕ паян вырăнти хăй тытăмлăх органĕн тытăмĕнче тăрать. Бюджетăн çĕнĕ классификацийĕ те вăя кĕчĕ – çÿхе брошюрăран вăл тĕрлĕ статьясенчен тăракан хулăм том пулса тăчĕ.**

**Район администрацийĕн финанс пайĕ çитĕнÿ хыççăн çитĕнÿ туни коллектив вăхăт ыйтнипе тан пынине çирĕплетет. Акă 2010 çулта вăл «Лучшее муниципальное образование в сфере управления общественными финансами» Пĕтĕм Раççейри виççĕмĕш конкурсра çĕнтерÿçĕн дипломне илме тивĕçрĕ, 2011 çулта çак тăваттăмĕш хут иртекен конкурсрах уйрăм номинаци çĕнтерÿçи пулса тăчĕ.**

**Юлашки çулсенче пухăнакан тупăш пысăкланни район территорийĕнче тирпей-илем ĕçне пысăк тимлĕх уйăрма май пачĕ. Муниципаллă учреждениесенче капиталлă юсав ĕçĕсем ирттереççĕ, вырăнти тĕллевлĕ программăсем те пурнăçланса пыраççĕ, çамрăк çемьесене пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма субсидисем уйăраççĕ тата ытти нумай тĕрлĕ тăкаксем те халăха муниципаллă услугăсемпе тивĕçтерессине пахалăхлă туса пыма, учрежденисен пурлăх никĕсне çирĕплетсе пыма май параççĕ.**



**Сăн ÿкерчĕкре: финанс пайĕнче паян вăй хуракан специалистсем, варринче – пай ертÿçи Рената Иосифовна Ананьева.**

**Н. НИКОЛАЕВА**
**сăн ÿкерчĕкĕ.**

### Пуçламăш утăмсем

Районти финанс служби иртнĕ ĕмĕрĕн çирĕммĕш çулĕсенчех пуçланса кайнă. Унăн аталанăвĕ вара Сĕнтĕр, каярах Муркаш районĕсен аталанăвĕпе тачă çыхăнса тăрать. Паллах, тĕрлĕ тапхăрсенчи аталану çулĕ вăл вăхăтри экономикăпа социаллă тата политика лару-тăрăвĕ мĕнле пулнинчен чылай килнĕ. Шел пулин те, архив докуменчĕсенче кун пирки çырни сахал. 1925 çулта фининспектор участокĕ Шупашкар уес финанс пайне пăхăнса тăнă. Вăл вăхăтра пурĕ те кун пек 5 пай кăна пулнă: Патăрьелте, Çĕрпÿре, Шупашкарта, Етĕрнере тата Çĕнĕ Улатăрта. Çапла вара вăл вăхăтра район бюджетне Шупашкарти финанс пайĕ çирĕплетнĕ. Фининспеткор участокĕ вара налук шутласа парассипе тата ăна предприятисенчен, халăхран пухассипе тимленĕ, шутласа панă налук суммисене кура облигацисем сутнă, патентсем панă, вырăнти бюджет тăкаксене саплаштарнă. Вăл вăхăтра вырăнти бюджета райисполком бюджечĕ тенĕ. Иртнĕ ĕмĕрти çирĕммĕш çулсенчи иккĕмĕш çурринче вăйра пулнă пĕр уйрăмлăх пирки каласа хăвармалла: бюджета ун чухне пĕр квартал валли кăна йышăнса çирĕплетнĕ пулнă. Каярах вара – пĕр çуллăха. Анчах та бюджет çирĕплетмелли çулталăк календарьтипе пĕр килмен – октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçланнă. Вăл вăхăтра финанс ĕçĕ-хĕлĕнче çак сферăра опыт пухма ĕлкĕрнĕ специалистсем çитмен.

Районта хăй тĕллĕнхи финанс органĕ йĕркеленнине 1927-мĕш çулхи октябрьпе палăртма пулать. Сĕнтĕр райисполком хушăвĕ çав çулхи пĕрремĕш октябрĕнтен районти финанс пайĕн пĕрремĕш налук ĕçченне, бухгалтерне, кассира, счетовода тата финанс инспекторне ĕçе илни çинчен çирĕплетет. Райфон пĕрремĕш ертÿçи В. Васильев пулнă, çак должноçра вăл 1929 çулхи февральчен вăй хунă.

Иртнĕ ĕмĕрĕн вăтăрмĕш çулĕсенче финанс пайĕ пилĕк çуллăхсене пăхăнса пырса ĕçленĕ. Пай ĕçченĕсем укçа-тенкĕ куçнине контрольленипе пĕрлех кредит парас тата страхлас ĕçсене те туса пынă. Кашни ял советне налук агенчĕ çирĕплетнĕ. Вĕсем халăхран, колхозсенчен, кооперации пĕрлешĕвĕсенчен налук пухассишĕн яваплă пулнă. 1938 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне финанс пайĕн штачĕ 40 ĕçченрен тăнă, вĕсенчен 25-ĕшĕ – налук агенчĕсем. Архив докуменчĕсене тишкерсен вăл вăхăтра ĕçре айăпа кĕнĕшĕн питĕ çирĕп наказани кĕтни курăнать. Сăмахран, налук агенчĕсен вĕрентÿ занятине ял советĕнчен 10–15 минут юлса пынăшăн выговор панă, е ĕçе суда парса ĕçрен кăларма та пултарнă. Ĕçрен кăларнисен сăлтавĕсенчен витĕмлисен шутĕнче «поппа çыхăну тытни тата ачана тĕне кĕртни» пулнă. Лайăх ĕçленĕшĕн тата тупăш пуçтарассинче план тултарнăшăн хавхалантарни вара сайрарах пулнă. Анчах та çакăншăн укçан премисем е тата Мускава ВДНХ-на кайса килмелли путевкăсем панă. Вăл вăхăтра налук агенчĕсен уйăхри ĕç укçи 150–180 тенкĕпе танлашнă, пай ертÿçин ĕç укçи 400–600 тенкĕ чухлĕ пулнă, налук тата бюджет инспекторĕсен, бухгалтерсен – 250–350 тенкĕ, конюх-кучер уйăхра 140 тенкĕ илсе тăнă, техничка вара – 57 тенкĕ. Çав вăхăтра техничкăсăр пуçне пур должноçа та арçынсем йышăннă пулнă. Финанс пайĕн ертÿçинче П. Кузнецов (1929 çулхи февралĕнчен 1930 çулхи мартчен), архив докуменчĕсенче ячĕ сыхланса юлман Соловьев (1930 çулхи мартран пуçласа 1931 çулхи октябрьччен), Е. Ухов (1932 çул), Антип Трофимович Калининпа (1932–1938 çулсем) Михаил Герасимович Смирнов (1938–1941 çулсем) ертÿçĕре ытларах вăхăт тимленĕ.

### Вăрçă йывăрлăхĕсем тата ун хыççăнхи пысăк ответлăх

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланасанах пуян опыт пухма ĕлкĕрнĕ финанс ĕçченĕсем алла пăшал тытса вăрçа тухса кайнă. Архивра сыхланса юлнă хушу кĕнекисен сарăхнă страницисенче кун пирки тĕплĕнрех пĕлме пулать. 1941 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнчех Сĕнтĕр райисполкомĕн финанс пайĕн 18 ĕçченне рабочисемпе хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн ретне йышăннă. Пайра ĕçлеме юлнисем çине те пысăк яваплăх тиеннĕ: хушма тупăш шыраса илесси, çар займĕсене вырнаçтарасси, фронт тата районăн социаллă нушисене тивĕçтерме укçа-тенкĕне вăхăтра куçарса тăрса мобилизаци планне тултарасси вăрçă вăхăтĕнче питĕ пысăк ответлăх ыйтнă.

Çĕр-шывăн йывăр вăхăтра финанс пайне ĕçлеме хĕрарăмсен килмелле пулса тухать, вăл шутра пирĕн районта вăхăтлăх пурăнаканнисен те. Пирĕн тăрăхшăн ют хушаматсем архив докуменчĕсенче çырăнса юлнă: Л. Келлер, З. Грибова, А. Петельникова, А. Шидловская. Вăрçă вăхăтĕнче финанс пайне ертсе пыракансем те улшăнсах тăнă: Г. Коротков, И. Смирнов, И. Патеев, П. Гаврилов, П. Чумаков, С. Гаврилов вăй хунă.

Вăрçăччен пай ертÿçинче тăрăшнă М. Смирнов вăрçă хыççăн киле таврăнсан ăна малалла ертсе пырать – 1950-мĕш çулсем пуçламăшĕччченех. Шăпах аллăмĕш çулсенче финанс пайне тата тепĕр ĕç пурнăçлама шанаççĕ: патшалăх нушине тивĕçтерме халăхран аш-какай, сĕт, çу, çăм, çăмарта, çĕр улми пуçтарнă.

1960-мĕш çулсенче пулса иртнĕ улшăнусем чылай енне пырса тивнĕ, вăл шутра район хальхи чикĕсемпе йĕркеленни çине те, влаç органĕсен тата вĕсен структурисен ячĕсем çине те. Финанс пайĕн ĕçĕпе тивĕçĕсем вара улшăнмаççĕ.

Патшалăхăн тата халăхăн аталанăвне тĕрлĕ çулхи бюджечĕсене тишкерсе калама пулать. Çулталăк отчечĕсем хитре сăмахсенчен мар, цифрăсенчен кăна тăраççĕ, анчах та шăпах вĕсем патшалăхăн тĕрлĕ вăхăтри приоритетлă енĕсене, тĕллевĕсемпе задачисене палăртса пыма май параççĕ. Сăмахран, малтанхи çулсенче – 1920–1930-мĕшсенче, дефицитлă бюджетсен тĕп тĕллевĕ районта больница, фельдшер пункчĕсене, лавккасемпе мунчасене, вулав çурчĕсене ĕçлеттерме ярасси тата шкулсене юсасси пулнă. Тупăшăн пысăк пайне – 45–48 процент таранах – халăха вĕрентесси çине уйăрнă, сывлăха сыхлас ĕçе аталантарма – 11–15 процент чухлĕ. Бюджет укçи-тенкипе агрономипе зоотехника тата ветеринари специалисчĕсене те тытса тăнă. Обществăлла йĕркене сыхласси, коммуналлă хуçалăха тытса тăрасси, пенси тата пособисем тÿлесси те бюджетран пулнă.

Совет саманинчи бюджетсем стабильлĕхпе тата дефицитлă пулманнипе палăрса тăнă. Бюджетра пухăнакан укçа-тенкĕ, тĕпрен илсен, дотацисенчен, тупăшран тата тупăш çаврăнăшĕнчен тÿлекен налуксенчен килнĕ. Вăл вăхăтра тĕп тÿлевçĕсен шутĕнче ял хуçалăх тата промышленноç предприятийĕсем пулнă. Бюджетран уйăрнă укçа-тенкĕн пысăк пайĕ каллех вĕрентÿ, сывлăха сыхлас ĕç тата халăх хуçалăхĕ валли пулнă.

Çак отчетсемпе ытти документсенче финанс службинче чылай çул вăй хунă çынсен ĕçĕ-хĕлĕ, ăсталăхĕ палăрать. Вĕсем: Л. Тимофеева, Н. Тихонова, Н. Ланцев, Л. Мастерова, В. Ярикова, Г. Дмитриева, тата ыттисем те. Халĕ Н. Ланцева, Н. Данилова финанс пайĕнче 20 çул ытла ĕçлеççĕ, Ж. Ефимова, В. Кириллова, И. Белова – 10 çул ытла. Пайри водитель Н. Шулдрин 18 çул пĕр ĕçре.

### Пай ертÿçисем – районăн мăнаçлăхĕ

Муркашри финанс пайĕн ертÿçинче вăй хунисем пирĕн тăрăхшăн хăйне майлă мăнаçлăх пулса тăраççĕ. Вĕсем пурте чăн-чăн ăстасем, ăслă-тăнлă тата малалла пăхакан çынсем пулнă. Финанс службинче ĕçлени вĕсен пурнăç ĕçĕ шутланнă. Пирĕн район экономики вăйланса ура çине тăнинче вĕсен тÿпи пĕчĕк мар. 1964 – 1977 çулсенче Георгий Степанович Степанов, хыççăнхи çулсенче – 1985 çулхи февральчен – Элĕк çынни Геннадий Леонтьевич Леонтьев финанс пайне ертсе пырса район аталанăвне сумлă тÿпе хывнă. Çулталăка майлă çак должноçа Елена Николаевна Степанова тимленĕ хыççăн 1995 çулччченех ертÿçĕре Нина Андреевна Константинова тăрăшнă. Вăл ĕçленĕ вăхăт çĕр-шыври перестройка тапхăрĕпе, çĕр-шыв саланнипе, экономика çыхăнăвĕсем таталнипе пĕр килнĕ. Çак йывăр çулсем финанс специалисчĕсенчен ума тухса тăракан ыйтусене тĕрĕс татса пама пысăк ăсталăх, вăй-хал ыйтни каламасăрах паллă. Н. Константиновăна финанс пайне ертсе пыма шанса вара районти ертÿçĕсем пĕрре те йăнăшман: халĕ Нина Андреевна финанспа бюджет надзорĕн Чăваш Республикинчи территори управленине ертсе пырать.

Валентина Амвросиевна Иванова районти финанс органĕсенче 36 çул ытла тăрăшнă: аслă экономистран пуçласа 1995 çулта район администрацийĕн финанс пайĕн заведующийĕ пулни таранах. В. Иванова ертсе пынă чухне районти финанс пайĕ бюджета казначейство мелĕпе пурнăçласси çине куçнă, бюджет реформипе çыхăннă пăтăрмахсене тивĕçлипе çĕнтерсе пынă. Халĕ ĕçлекен чылай специалист Валентина Амвросиевнăна хăйĕн вĕрентекенĕ тесе шутлать. Вăл финанс пайне кирек хăш вăхăтра та ăста специалистсем ертсе пынине тепĕр хут çирĕплетсе парать.

Паян та финанс пайĕ вăхăт ыйтнипе тан пырать. Çакăнпа пĕрлех пирĕн умри тĕп задачăсем улшăнмаççĕ: май пур таран ытларах та ытларах тупăш пухмалла тата унпа эффективлă усă курмалла.

**Самантпа усă курса вара ĕçтешсене пурне те професси уявĕпе, çавăн пекех районти финанс службин йĕркеленнĕренпе 85 çул çитнипе саламлатăп. Çирĕп сывлăх суннипе пĕрлех ыранхи куна яланах шанчăклăн пăхма, хастар кăмăлпа ĕçлеме сĕнетĕп. Çывăх çынсемпе тата ĕçтешсемпе хутшăнни сире яланах савăнăç кăна кÿтĕр.**

**Р. АНАНЬЕВА,**
**район администрацийĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ.**

## Официально

**Чувашская Республика**
**Администрация Моргаушского района**
**ПОСТАНОВЛЕНИЕ**
**от 31.08.2012г. № 761**
**с. Моргауши**

**Об отмене постановления администрации Моргаушского района от 10.08.2012 г. № 687**

**Администрация Моргаушского района постановляет:**

Отменить постановление администрации Моргаушского района от 10.08.2012 г. №687 «Об утверждении конкурсной документации по проведению открытого конкурса на право обслуживания внутрирайонных маршрутных регулярных пассажирских перевозок автомобильным транспортом, организованных сверх муниципального заказа в Моргаушском районе: «Моргауши–Кашмаши», «Моргауши–Тойгильдино», «Моргауши–Шептаки», «Моргауши–Мадики», «Моргауши–Юськасы (ч/з Н. Панклеи)», «Моргауши–Васькино», «Моргауши–Тиуши», «Моргауши–Хорной», «Моргауши–Тренькино–Ильинка», «Моргауши–Б. Карачкино».

**Глава администрации**
**Моргаушского района Р.Н. Тимофеев.**

## Объявление

### ОБЪЯВЛЕНИЕ О ПРОДЛЕНИИ СРОКА ПРИЕМА ЗАЯВОК!

Управляющая компания МУП «Рынок «Моргаушский», находящаяся по адресу: с. Моргауши, ул.Чапаева, д.44а, объявляет о продлении срока приема заявок на проведение конкурсного отбора начинающих субъектов малого предпринимательства для размещения в Производственном бизнес - инкубаторе с.Моргауши Моргаушского района.

Для участия в конкурсном отборе допускаются юридические лица, индивидуальные предприниматели, своевременно представившие конкурсную заявку, надлежащим образом оформленные документы, а также выполнившие все требования, предусмотренные условиями конкурса.

Для участия в конкурсе претендент подает, запечатанный в конверт, представляющий собой комплект следующих документов:

заявка на участие в конкурсе;

копии учредительных документов и документа о государственной регистрации - для юридических лиц;

свидетельство о государственной регистрации предпринимателя, осуществляющего свою деятельность без образования юридического лица – для индивидуальных предпринимателей;

утвержденный претендентом бизнес-план, направленный на производственную деятельность;

копии бухгалтерской отчетности за предыдущий год и истекший квартал текущего года, заверенные территориальным органом Федеральной налоговой службы по месту государственной регистрации претендента;

подтверждение территориального органа Федеральной налоговой службы по месту государственной регистрации претендента об отсутствии просроченной задолженности по платежам в бюджет и внебюджетные фонды, в том числе по штрафам и финансовым санкциям;

подтверждение финансового отдела администрации Моргаушского района Чувашской Республики об отсутствии просроченной задолженности по ранее предоставленным из республиканского бюджета Чувашской Республики и местных бюджетов средствам, выданным на возвратной основе.

Указанные документы скрепляются подписью и печатью претендента, либо личной подписью индивидуального предпринимателя с обязательным указанием реквизитов свидетельства о государственной регистрации и идентификационного номера налогоплательщика. Форму заявки можно получить у Управляющей компании - МУП «Рынок «Моргаушский» нарочно и в электронном виде. Прием документов на участие в конкурсе осуществляется с 5 сентября 2012 года.

Весь пакет документов представляется не позднее 4 октября 2012 г. в Управляющую компанию МУП «Рынок «Моргаушский» по адресу: с. Моргауши, ул. Чапаева, д.44а, тел. 63-3-45.

Стоимость аренды офисных помещений составляет - 150 руб. за кв.м, производственных помещений - 50 руб. за кв.м.

Конкурс состоится 5 октября 2012 года в 10.00 часов в зале заседаний Производственного бизнес - инкубатора с. Моргауши Моргаушского района по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д.25.

# Ĕçченсемпе паллашрăмăр



«Передовик» хуçалăхăн Ахманери сĕт фермине çитсен кунта çĕнĕлĕхсемпе тан пыма тăрăшни куç умне пулать. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче ĕнесене машинăпа сăвакан операторсемпе техник-осеменаторсен кăçалхи конкурсĕнче асăннă ферма ертӳçипе калаçни халĕ те асрах.

– Муркашра ырă йăлана кĕнĕ çак конкурса кун йĕркинчен кăларманни тата ăна кăçал пирĕн патăмăрта иртterме палăртни «Передовик» хуçалăх ĕçченĕсем йывăрлăхсем умĕнче пуç усманнине çирĕплетет. Умри тĕллевсем пирĕн те пысăк. Вĕсене пурнăçлама тăтăшах çĕннине алла илмелле. Кунта вара тирпейлĕх тĕп вырăнта тănине пирĕнтен кашниех ăнланать. Кооператив ертӳçи Н. Царев тимленипе кăçал сарайсем сывăхĕнчи пылчăкран тасалтăмăр. Унта тăпра тултарса вак чул сарса ферма çывăхне хăт кĕртрĕмĕр. Сарайсене дезинфекцилени-шуратни ĕçлес хавхаланăва çĕклет, – терĕ ĕне сăвакансемпе канашласа тăракан Надежда Ильинична Багина заведующи **(сăн ӳкерчĕкре сулахайран иккĕмĕшĕ)**. Унăн сăмахĕпе çак фермăра 16 çул дояркăра ĕçлекен Антонина Иванова, пĕтĕмпе 21 çул ĕне сăвакан Валентина Павлова тата вĕсемпе 3 çул вăй хуракан Валентина Алексеева та **(сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла)** килĕшрĕç.

## Агробизнес аталанăвĕн çулĕсемпе

# Чечекпе туслисем хĕле хатĕр

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Çитес хĕл кунĕсенче вылăхсен йышне сыхласа хăварасси тата продукци илессине тивĕçлĕ шайра тытасси – кооператив ĕçченĕсен паянхи тĕп тĕллевĕ. Çакна ĕненсе тата ăна пурнăçлассишĕн тимленине курса тухрăмăр эпир Патаккассинчен. Çивитти тĕлĕшпе юсав ĕçĕсем çителĕклĕ пурнăçланă, дезинфекцилесе шуратнă, ферма ĕçченĕсен тăрăшулăхĕпе тирпейлĕх тата чечексем хуçаланакан фермăран кăмăллă тухрăмăр. Черетре – Эльвира Ботникова ертсе пыракан Орининти сысна ферми. 400 пуç ытла сыснана кунта 4 çын пăхать. Пур çĕрте те юсавçă алли çитни сисĕнекен тирпейлĕ витесемпе утма кăмăллă.

– Самăртма хупнă сыснасем талăксерен 550 грамм, ӳстерекен уйăмрисем вăтамран 400 грамм, икĕ уйăхченхисем 180 грамм ӳт хушни пирĕн тăрăшулăх харама кайманнине çирĕплетет. Çакă ӳсĕмĕн çĕнĕ чиккисем пирки шухăшлаттарать, – тесе ăсатрĕ пире нумай çĕрте чечексем ӳснипе паллаштарса Эльвира Геннадьевна.

Юлашки вăхăтри çумăрсемччен вырмана вĕçленипе кăмăллă Ю. Шишокин. Фермăсене хĕле хатĕрлессипе туса çитерейменнисем те пуррине палăртса халĕ пур вăя та çавăнта яваçтарасси пирки ĕмĕтленет вăл.

Атапайĕнчи ăратлă пăру фермине Е. Замкова ертсе пырать. Осеменатор тивĕçĕсене те хĕрарăм хăех пурнăçлать. «87 тынашкана пăхассипе эпир 7-ĕн ĕçлетпĕр. Тынашкасем хулăн ай сарăм çинче тăнăран тислĕкне те лашасемпе кулленех кăларса тăратпăр. Фермăна çу кунĕсенче юсаса пачĕç те хĕл кунĕсем хăратмаççĕ ĕнтĕ пире», – терĕ вăл.

Чечексем йышлă Оринин тăрăхĕнчен «Восток» хуçалăхăн Мулкачкассинчи общественăлла вылăх-чĕрлĕх фермисене çитсен вылăхсем тĕлне ытларах çум курăкĕ тыткăнларĕ. Дезинфекциленĕ сарайсене шуратман. Урайсене, кормушкăсене самай юсанă пулсан та çивиттисен патне алă çитеймен. Кунне 4 кг çăнăх çиекен вăкăрсем мăнтăр тăнине пăхма кăмăллă пулчĕ. Çапах территорие тирпейлесси тата сăвăм пĕчĕккĕ пулни татса паман йытусем те пурри пирки калать.

«Передовик» хуçалăхăн Ахманери сĕт фермине кăçал машинăпа ĕне сăвакан операторсен тата техник-осеменаторсен районти конкурсĕ иртнĕ май сарайсене ун чухнех хĕле хатĕрлесе çитерни паллăччĕ. Çулталăк каялла ферма таврашĕнче çăрăлнă пылчăка кăçал курма пулмарĕ. Сарайсен патне пыма та, вĕсене кĕме те кăмăллă. Ферма сывăхĕнче ĕнесене усăлтарма кăлармалли лаптăк тума пуçлани те «Передовик» хуçалăх ертӳçисем ыранхи кунпа пурăнни пирки калать.

Çу кунĕсенче дезинфекциленĕ тата шуратса-юсаса хăт-илем кĕртнĕ «Герой» хуçалăхăн вылăх-чĕрлĕх сарайĕсенче таса та хитре сыснасемпе мăйракаллă шултра вылăха курма май килчĕ. Витесенче пушар хăрушсăрлăх правилисене пăснисех курăнманни, пысăк юсав ĕçĕсемех пулманни хуçалăх, тĕпрен илсен, хĕле хатĕрри пирки калать. Икĕ ферминче те чечек йăранĕсем пурри, çум курăкĕсене çулсах тăни, кану пӳлĕмĕсене тирпейлĕ тытни ĕç культури кунта иккĕмĕш вырăнта пулманнине çирĕплетет.

Хамăр рейдра фермăсене тирпейилем кĕртессипе ĕçленине тĕп вырăна хутăмăр. Мĕншĕн тесен тирпейлĕ ферма хĕле хатĕрри иккĕлентермест. Ăратлă вылăх ĕрчетекен «Свобода» кооператив-заводăн Кашмашри сысна фермине çитсен чечекпе пахча çимĕç ӳстерекен теплицăна лекнĕнех туйăнчĕ. Вун-вун тĕрлĕ чечек йăранĕ, пахча çимĕç лартнă кĕтессем – районта урăх нисăта та çук куç ытарайми илем.

– Ферма ĕçченĕсен ĕç юратăвĕн палли ку. Çак илемшĕн çулленех укçан хавхалантарни ытти ферма коллективĕсене те вырăнтан тапратрĕ. Çапла вара ферма коллективĕсем хушшинче юлашки çулсенче çулленех тирпейилем конкурсне ирттеретпĕр. Илемлĕхе туяканăн ĕçĕ те мал туртăмлă аталанать, – ăнлантарса калаçать хуçалăх ертӳçи Виталий Никитин.

Кашмашри ĕне ферминче те чечек тĕнчи вăй илнĕ. Çак илеме тытса пыракан коллектив (ăна Ю. Петровский ертсе пырать) паянхи ĕнесене хĕле тăратма хатĕр ĕнтĕ. Вылăх апачĕ енчен çителĕклĕ пулни 164 ĕне тытакан коллектива кашни ĕне пуçне талăкра 13 килограма яхăн сĕт сума май парать. «Çак кăтарту хĕл кунĕсенче те чакмасса шантаратпăр», – терĕç каçхи сăвăма пыракан дояркăсем.

Çапла, уйăрса каламасăрах хăш хуçалăх фермисем хĕле епле хатĕрленнине вулакан ăнланчĕ пулĕ. Пĕрисем çанă таврăса ĕçлеççĕ пулсан, вĕсен ĕçне курса ыттисем те ыйхăран вăранасса шанас килет. Шаннă кайăк йăвара пулнипе пулманни тепĕр 2–3 эрнерен пулакан пĕтĕмĕшле тĕрĕслев кăтартса парĕ. Хальлĕхе чечекпе туслисем çеç хĕле ытларах хатĕрри курăнать.

**Рейд ушкăнĕ:**
**Т. АЛЕКСЕЕВА,**
**район администрацийĕн экономика тата АПК аталанăвĕ пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ;**
**А. ФЕДОРОВА,**
**районти вылăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен станцин ветеринари врачĕ;**
**А. БЕЛОВ,**
**райхаçатăн экономика пайĕн ертӳçи.**

## 01 пĕлтерет, асăрхаттарать

# Тимлĕх пурне те кирлĕ



Кăçалхи сакăр уйăх хыçа юлчĕ ĕнтĕ. Районти ял хуçалăх ĕçченĕсем иртен пуçласа каçченех уяр кунăн кашни саманчĕпе усă курса вырмара вăй хураççĕ. Çак тапхăрта Муркаш ен территорийĕнче пушар хăрушсăрлăхĕ нихăçанхинчен ытла малти вырăнта тăмалла пек туйăнать, анчах... Районти 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕпе ведомствăлла пушар хуралĕсен питех те канăçсăр вăхăт. Çынсен самантлăх асăрханусăрлăхĕпе ответлă ĕçченсен тимсĕрлĕхĕ каялла таварăмалла мар инкексем патне илсе çитереççĕ: кĕске вăхăтрах çĕршер пин тенкĕлĕх пурлăх кĕлленет.

Пушар хăрушсăрлăхĕпе паянхи куна район территорийĕнче çапларах лару-тăру. Иртнĕ çулхи çурла уйăхĕн 31-мĕшĕ тĕлне районта 27 пушар пулнă тата ирĕке кайнă вут-çулăм тăватă çын пурнăçне татнă пулсан, кăçал та çак тапхăрта эпир 27 пушар регистрацилерĕмĕр, тăватă çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Пушарсем кӳнĕ тăкакасем пĕчĕк мар.

Каласа хăвармалла, пушарсен ытларах хисепĕ (19 инкек) граждансен килти хушма хуçалăхĕсенче пулчĕ. Юлашки тĕслĕхре пушар хурал ĕçченĕсен Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Кĕртекасси ялĕнче пурăнакан П. Ивановăн лаççинче вăй илнĕ «хĕрлĕ автанпа» кĕрешме тиврĕ. Вырăнти ирĕклĕ пушар хурал команди ЗиЛ-131 автомашинăпа çийĕнчех инкек вырăнне тухнăран çеç вут-кăвара ытлашши алхасма памарăмăр. Кӳршĕсен 2–3 метрта вырнаçнă пурăнмалли çуртне те çулăмран сыхласа хăварма май килчĕ. Инкек сăлтавĕ, малтанласа палăртнă тăрăх, апат пиçме лартнă газ плитине никам пăхмасăр хăварни.

«Симĕс ĕç çире» те, вырма вăхăтĕнче те пушар хăрушсăрлăх ыйтăвне çӳллĕ шайра тытмалли пирки маларахах асăрхаттарнăччĕ, паян та аса илтеретĕп. Анчах вут-кăвар тухнă тĕслĕхсем çаваçах пур-ха. Кăшт маларах Чапаев яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнче утă çулакан комбайна «хĕрлĕ автан» иленни пулнăччĕ. Иртнĕ кунсенче вара Ятманта А. Максимовăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче тырă склачĕ кĕлленчĕ. Иккĕмĕш тĕслĕхпе паян шалти ĕçсен пайĕ ĕçлет.

Çанталăк условийĕсене кура вырма вĕçленменха. Маларах каланисене шута илсе пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче, уйрăм çынсен килĕсенче пушар хăрушсăрлăхĕ çине ытларах тимлĕх уйăрма ыйтатăп. Вырăнти ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен, ял тăрăхĕсен депутачĕсен халăхпа ăнлантару ĕçĕсем ирттерме, ялсенче пушар вăхăтĕнче шыв илессипе тухса тăракан ыйтусене татса парассипе ытларах ĕçлемелле. Кунпа пĕрлех ялсенче каçхи хуралсем йĕркелессине, çынсене пушар хăрушсăрлăх правилисене вĕрентессине, кашни килти пушар хăрушсăрлăх ыйтăвне тишкерессине, кашни ялта тата фермăпа машина-трактор паркĕнче пушар вăхăтĕнче халăха сасă парса систермелли устройствăсем йĕркелессине манас марччĕ. Хĕле хатĕрленес тапхăр сывхарнă май ВДПО ĕçченĕсен те халăх хушшинче ăнлантару ĕçĕсем анлăрах ирттерĕç.

Çаксене тата хамăра хушнине шута илсе эпир те – патшалăх пушар надзорĕн Муркаш районĕнче ĕçлекен уйрăмĕ – ĕç коллективĕсенчен, уйрăм граждансенчен пушар хăрушсăрлăх правилисене пăснăшăн çирĕпрех ыйтăпăр. Çавăнпа та административлă явап тытас килмесен пушар хăрушсăрлăх правилисене куллен пăхăнар. Тимлĕх пурне те кирлине пурнăç ыйтать.

**А. ИЗОНОВ,**
**патшалăх пушар надзорĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

## Истори

# Унтанпа 67 çул çитрĕ

Иккĕмĕш тĕнче вăрçи вĕçленнĕренпе сентябрĕн 2-мĕшĕнче 67 çул çитрĕ. Пĕлетпĕр ĕнтĕ, ку милитаристла Япони 1945 çулхи сентябрĕн 2-мĕшĕнче капитуляци акне алă пусса çирĕплетнипе çыхăннă. Ултă çул пынă тĕнче вăрçине 110 миллион ытла çын хутшăннă, 55 миллиона яхăн çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă тесе çирĕплетеççĕ, вăл шутра – 27 миллион майлă совет граждансем.

Шыравçă-патриотсем "Никам та манăçман, нимĕн те манăçман" девиза пăрахăçламаççĕ. Нумаях пулмасть Санкт-Петербургри чăвашсен ентешлĕхĕ тата Чăваш наци конгресĕ тăрăшнипе çак паттăр-хулари Пискарево мемориал комплексĕнче кунта пытарнă чăваш салтакĕсен ячĕпе гранитран тунă асăну плитине уçнă. Блокадăри Ленинграда хӳтĕленĕ тата ирĕке кăларнă çĕре хутшăнса пуç хунă 300 ытла ентешĕмĕрĕн ятне тупса палăртнă. Вĕсен ячĕсене тата ăçта çуралнине кăтартакан буклет кăларнă. Паттăрсем вара Чăваш Республикин кашни хулипе районĕнчех нумайăн хутшăннă. Муркаш районĕнчен тухнă, вăрçă хирĕнче пулнă тата паттăр-хулана хӳтĕлесе пуçĕсене хунă çирĕм салтак ятне те кĕртнĕ унта. Акă вĕсен ячĕсем:

**Кузьма Архипович Архипов (1902 ç. ç.) Вăрманкас Хачăк**
**Василий Игнатьевич Игнатьев (1906 ç. ç.) Муркаш**
**Михаил Александрович Коваленко (1919 ç. ç.) Мăн Сĕнтĕр**
**Василий Максимович Кольцов (1911 ç. ç.) Ятман**
**Николай Петрович Лаптев (1914 ç. ç.) Кăпас**
**Николай Евлампьевич Леонтьев (1917 ç. ç.) Оринин**
**Роман Леонтьевич Леонтьев (1907 ç. ç.) Исетеркке**
**Архип Михайлович Михайлов (1923 ç. ç.) Автанкасси**
**Федор Николаевич Николаев (1898 ç. ç.) Тойкилтĕ**
**Иван Яковлевич Перлов (1914 ç. ç.) Çеçмер**
**Василий Петрович Петров (1905 ç. ç.) Кашмаш**
**Иван Павлович Скворцов (1906 ç. ç.) Мăн Сĕнтĕр**
**Дмитрий Яковлевич Смирнов (1916 ç. ç. ) Çĕн Тăмлай**
**Дмитрий Егорович Сорокин (1909 ç. ç.) Мăн Тутаркас**
**Изосим Максимович Сорокин (1918 ç. ç.) Кашмаш**
**Алексей Тихонович Тихонов (1904 ç. ç.) Рыккакасси**
**Валентин Филиппович Филиппов (1919 ç. ç.) Уйкас Янасал**
**Андрей Иванович Фролов (1909 ç. ç.) Пĕрремĕш Май выççăлкки**
**Антон Федорович Фуражников (1908 ç. ç.) Çатракасси**
**Василий Михайлович Шаландаев (1910 ç. ç.) Мăн Сĕнтĕр.**

**В. ФЕДОРОВ,**
**общественăлла корреспондент.**

## Извещение о проведении открытого аукциона

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики (далее - организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе (далее - аукцион), открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров аренды земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

Основание: постановление администрации Моргаушского района Чувашской Республики от 21.08.2012 № 728

Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов: 429530, с. Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: http://gov.cap.ru/main/asp?govid=71.

Контактные лица: Захаров И.Н., начальник отдела имущественных и земельных отношений, тел.: 62-2-66

Характеристика объектов аренды:

**Лот №1** – земельный участок с кадастровым номером 21:17:160302:158, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с. Моргауши, ул. Парковая, для строительства многоквартирного жилого дома, площадью 10683 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка: не имеются.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы) – 28100 (двадцать восемь тысяч сто) рублей.

Сумма задатка – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка.

Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены годовой арендной платы земельного участка (1 405 рублей).

Срок аренды – 5 лет.

**Лот №2** –земельный участок с кадастровым номером 21:17:030801:41, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Шерек, для сельскохозяйственного производства, площадью 7085 кв.м.

Обременения: земельный участок не обременен правами третьих лиц, не состоит в залоге, в споре и под арестом.

Ограничения использования земельного участка отсутствуют.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы) – 500 (пятьсот) рублей.

Сумма задатка – 20 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

Шаг аукциона – 5 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка (25 рублей).

Срок аренды – 5 лет.

**Лот №3** - земельный участок с кадастровым номером 21:17:060401:1131, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Советская, для установки временного торгового павильона, площадью 20 кв.м.

Обременения: земельный участок не обременен правами третьих лиц, не состоит в залоге, в споре и под арестом.

Ограничения использования земельного участка отсутствуют.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы) – 950 (девятьсот пятьдесят) рублей.

Сумма задатка – 20 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

Шаг аукциона – 5 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка (47 рублей 50 копеек).

Срок аренды – 5 лет.

**Информация о проведении аукциона:**

Перечень документов, представляемых заявителем для участия в аукционе:

1. Заявка на участие в аукционе (в установленной форме) в 2-х экземплярах, с указанием реквизитов счета для возврата задатка. Заявки на участие в аукционе принимаются в кабинете № 312 по рабочим дням по адресу организатора аукциона со дня опубликования данного извещения.

2. Платежный документ (и его копия), подтверждающий внесение заявителем задатка. Задаток перечисляется на реквизиты: Получатель платежа – финансовый отдел администрации Моргаушского района, ИНН 2112001366 КПП 211201001, лицевой счет 05123ЧМ0012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810975025013001 в Чувашском отделении №8613 ОАО «Сбербанк России», кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа (адрес участка) и дату аукциона.

Задаток возвращается всем претендентам аукциона, в соответствии с условиями договора о задатке, кроме победителя, в течение 3-х банковских дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

3. Выписка из Единого государственного реестра юридических лиц - для юридических лиц, выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей - для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность - для физических лиц.

Заявителем предоставляется опись документов в 2-х экземплярах, один из которых с указанием даты и времени (часы, минуты) приема заявки, удостоверенные подписью уполномоченного лица организатора аукциона, возвращается заявителю.

Срок приема и окончания приема заявок на участие в аукционе – с 06 сентября 2012 по 08 октября 2012 года.

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе.

С документацией об аукционе, в том числе с проектом договора аренды земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, каб. №312.

Дата, время и порядок осмотра земельного участка на местности: по предварительной записи в отделе имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района после публикации данного извещения.

Требования к участникам аукциона:

В аукционе на право заключения договоров аренды земельных участков может принять участие любое юридическое лицо независимо от организационно-правовой формы, формы собственности, места нахождения и места происхождения капитала или любое физическое лицо, в том числе индивидуальный предприниматель, претендующее на заключение договора, соответствующие требованиям, предусмотренным документацией об аукционе, и подавшее заявку в установленные сроки на участие в аукционе.

Рассмотрение заявок на участие в аукционе на предмет соответствия требованиям, установленным документацией об аукционе, и определение участников аукциона состоится на заседании Комиссии - 09 октября 2012 г. в 15.00 часов по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, малый зал заседаний, 3 этаж.

Победителем аукциона признается лицо, предложившее наиболее высокую цену годового размера арендной платы. По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора аренды земельного участка. Договор аренды земельного участка заключается в срок не позднее 5 рабочих дней со дня подписания протокола.

Время проведения открытого аукциона 10 октября 2012 года (по московскому времени): Лот №1 – 9.20, Лот №2 – 9.40, Лот №3 – 10.00.


## Пĕлтерӳсем. Объявления

Требуется продавец для торговли Чебоксарским трикотажем «Ивушка»: футболки, трико, нижнее белье, брюки и т.д. – все из хлопка (с. Моргауши, рынок, торговая точка № 22). Тел.: 8-906-134-48-01.

* * *

Лайăх ĕне сутатпăр, хĕрлĕ тĕслĕ.
Тел.: 8-903-358-95-41.

* * *

Дорожному предприятию требуются для работы в Моргаушском и Ядринском районах: водители на КАМАЗ-самосвал, машинисты грейдера, экскаватора, бульдозера, погрузчика, дорожные рабочие.
Тел.: 8-917-658-84-05.

* * *

ООО ПФ «ЛитСтройМаш» (бывшая территория «Сельхозхимии») на работу требуются: токари, фрезеровщики, сварщики, охранники. Оплата достойная. Тел.: 8-927-841-45-00. 2-3.

* * *

Продаю доски дубовые необрезные толщиной 7–8 см, разной длины. Цена договорная.
Тел.: 8-908-307-07-44, 63-0-39. Николай. 2-2.

* * *

Предлагаем в аренду нежилые помещения под офис площадью 16, 25 и 33 кв. м., расположенные по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4, пом. 4 (Дом быта, 2-ой этаж). Обращаться по тел.: 8(83541) 62-1-93, 62-9-40. 2-2.

* * *

Продаем ячмень, солому тюкованную.
Тел.: 8-927-843-52-40. 3-5.

Продаем керамзитобетонные блоки, цемент, песок, гравмассу, щебень, кирпич.
Тел.: 8-960-307-41-78. 10-10.

ООО «Ветеринарная медицина» приглашает Вас посетить ветеринарную аптеку, которая теперь находится по новому адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23 (МоргаушскАвтоТехСервис). Часы работы: с 8-00 до 17-00 ч., без выходных. Приносим свои извинения за те неудобства, которые возникли в связи с переездом. 4-5.

Приглашаем к участию в долевом строительстве (реконструкции) 12-тиквартирного трехэтажного жилого дома в с. Б. Сундырь, ул. Анисимова.
Тел.: 8-967-470-00-38. 5-10.

ОАО «ЧЗСМ» приглашает на работу в г. Чебоксары: водителей, рабочих в цех. Соц. пакет, высокая з/пл., предоставляется общежитие.
Тел.: 8(8352) 44-91-94, 44-01-11. 2-2.

Срочно! В Москву и Московскую обл. требуются фасовщицы, грузчики. Жилье, питание, транспорт – бесплатно. Вахта 20-30-45-60 дней, з/п 30 тыс. руб.
Тел.: 8(8352) 36-42-92, 36-42-94. 2-5.

# ВНИМАНИЕ!
## ТОЛЬКО 7 СЕНТЯБРЯ

**В Моргаушском РДК с 10-00 ч. до 18-00 ч. состоится грандиозная ярмарка-распродажа**

# КОНФИСКАТ

Напрямую из портов Одессы (Украина)

- Обувь муж., жен. (осень-зима) – 350 руб.
- Куртки (кожа), плащи, ветровки, дубленки – 550 руб.
- Пледы, покрывала, одеяла, подушки.
- Сорочки, пижамы, бриджи, футболки – от 150 руб.
- Нижнее белье, колготки, носки, полотенца, (Индия).
- Джинсы, толстовки, рубашки, туники, ночнушки.
- Детские футболки, колготки, толстовки.

## И МНОГОЕ ДРУГОЕ!
**ПРИХОДИТЕ И УБЕДИТЕСЬ САМИ!**


# Лев Михайлович ШАПОШНИКОВ



2012 çулхи авăн уйăхĕн 2-мĕшĕнче пултаруллă журналист, 1986 çултанпа Раççей журналистсен Союзĕн членĕ, район хаçачĕн аталанăвĕшĕн ырми-канми тăрăшнă Лев Михайлович Шапошников йывăр чирленĕ хыççăн пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ.

Л. Шапошников районти Кашмаш ялĕнче 1953 çулхи авăн уйăхĕн 26-мĕшĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Ялти шкулта вĕреннĕ чухнех тăван чĕлхе предметне ыттисенчен ытларах кăмăлланăскер алла аттестат илсессĕн 1970 çулта И. Ульянов ячĕллĕ чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультечĕн чăваш чĕлхипе литератури уйрăмне вĕренме кĕрет. 1975 çулта ăнă ăнăçлă вĕçлесе çак çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче Муркаш районĕнче тухса тăракан «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцине корреспондент пулса ĕçлеме вырнаçать.

Хаçат редакцийĕнче ĕçленĕ хушăра Лев Михайлович хăйĕн ăсталăхне тăтăшах ӳстерсе пычĕ. Çакна шута илсе тăрăшуллă журналистăн кĕçех аслă корреспондент тивĕçĕсене пурнăçлама тиврĕ. Ун хыççăн 1977 – 1983 çулсенче вăл хаçат редакцийĕн ял хуçалăх пайне ертсе пычĕ. Çав çулсенче ял хуçалăх ĕçне-хĕлне çутатасси уйрăмах вăй илчĕ. Унăн статйисемпе очеркĕсенче уй-хир ĕçченĕн, выльăх-чĕрлĕх патĕнче иртен пуçласа каçчен вăй хураканăн, техникăна ĕçлеттерекенĕн сăн-сăпачĕпе ĕçлеслĕхĕ, ĕçченлĕхĕ малта тăратчĕ. Вĕсен кун-çулĕ вулаканшăн ăнланулăччĕ. Л. Шапошников тĕрлĕ тематикăпа хускатнă ыйтусем вулаканшăн нихăçан та айккинче юлмастчĕç. Çавăнпа унăн статйисем çине çырусем те йышлă килетчĕç.

Уйрăм сăмах вăл спортпа физкультурăна парăнни пирки. Ял хуçалăх ыйтăвĕсемпе çырнă хушăрах асăннă тематика та унăн кун йĕркинче малта тăнă. Спорт уншăн яланах пĕлтерĕшлĕ пулнă.

Тăрăшулăхне тата ăсталăхне кура Лев Михайлович 1983 – 1985 çулсенче «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатăн редактор заместителĕнче ĕçлеме тивĕçрĕ. Аслă юлташăмăр 1985 – 1993 çулсенче хаçатăн тĕп редакторĕнче ĕçленĕ вăхăтра пирĕн тираж 8 пин экземпляра çитнинче те унăн тăрăшулăхĕ малти вырăнта тесе шутлатпăр.

Лев Михайловичăн чун ăшши тата ыттисене пулăшаслăхĕ ĕçтешĕсемшĕн чи кирличчĕ.

Л. М. Шапошников депутатсен районти Пухăвĕн депутатне те суйланнă, депутатсем хушшинче активлăхпа палăрнă.

Ĕçри тăрăшулăхĕшĕн ăна район администрацийĕн, Чăваш Республикин информаципе пичет министерствин, Чăваш Республикин физкультурăпа спорт тата туризм министерствин Хисеп грамотисемпе наградăланă.

Л.М. Шапошниковăн район хаçачĕн аталанăвне хывнă тӳпи районăмăр аталанăвĕшĕн те пĕлтерĕшлĕ. Çавăнпа та унăн ĕçĕ манăçа тухмĕ, сăнарĕ пирĕн чĕресенче упранĕ.

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕн коллективĕ.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА** от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок и замок на ручках окон. Шестикамерный профиль по цене трехкамерного. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 2-10.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 4-10.


Муркаш район администрацийĕ районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатра нумай çул, çав шутра тĕп редакторта ĕçленĕ

**Лев Михайлович ШАПОШНИКОВ**

йывăр чире пула вăхăтсăр вилсе кайнăран унăн тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Коллектив БУ «Каршлыхский дом-интернат для ветеранов войны и труда» выражает глубокое соболезнование сотруднице Бакиной Г.И. по поводу безвременной кончины брата

**ФРОЛОВА Николая Ивановича.**

Коллектив БУ «Каршлыхский дом-интернат для ветеранов войны и труда» выражает глубокое соболезнование сотруднице Гусевой З.М. по поводу безвременной кончины мужа

**ГУСЕВА Владислава Вячеславовича.**

## Прогноз погоды

| | среда 5 сентября | | | | четверг 6 сентября | | | | пятница 7 сентября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +11 | +14 | +18 | +12 | +10 | +15 | +19 | +14 | +13 | +14 | +16 | +12 |
| Давление мм | 743 | 742 | 743 | 744 | 744 | 743 | 742 | 743 | 742 | 740 | 739 | 741 |
| Влажность % | 100 | 96 | 68 | 90 | 98 | 78 | 67 | 94 | 100 | 100 | 93 | 98 |
| Ветер м/сек | 2 | 1 | 2 | 2 | 3 | 5 | 6 | 3 | 3 | 3 | 3 | 2 |
| | Ю | Ю-З | З | С-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | З | С-З |
| Солнце восход / заход | | 06:06 | 19:35 | | | 06:08 | 19:33 | | | 06:10 | 19:30 | |
| Луна восход / заход | | 20:43 | 11:55 | | | 21:12 | 13:01 | | | 21:47 | 14:03 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |


## Объявления

Принимаем КАРТОФЕЛЬ на крахмал.
Место приемки:
Вурнарский район, д. Кумаши.
По вопросам сдачи картофеля просим обращаться по телефонам:
(8352) 44-11-65, (83538) 2-70-43. 5-6.

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА**
от производителя.
Замер. Доставка бесплатно.
Низкие цены. 10-10.
Тел.: 8-987-576-65-62.



**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учреждениĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкрах хисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 04.09.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4678.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.